Григорьев А. К.В. Иванов – поэт, художник / А. Григорьев
// Ялав. – 1965. - № 5. – С. 26-30.

# К. В. ИВАНОВ—

Чăн-чăн искусствă çыннисен пултарулăхĕ яланах нумай енлĕ. Паха сăвăсем çырма пĕлекен çын музыкăна юратмасăр пултараймасть, музыкăпа туслашнă чĕре сăрсен илемлĕхне курмасăр юлас çук. Урăхла мĕнле пултăр-ха! Кашни искусствă этем чун-чĕрине, халăх пурнăçне, çутçанталăк ырлăхне хăйне евĕрлĕ, хăй пултарнă таран анлă уçса парать, пĕр искусствă тума пултарайманнине тепри тăвать.

Пурнăç пуянлăхне кĕтесрен, пĕр енчен çеç уçса парсан, искусствă хăйĕн тулли пĕлтерĕшне çухатать, художник ĕçĕ халăха тивĕçтерми пулать. Халăх интересĕсене хӳтĕлекен искусствă çыннисем пурнăçа талккишпех юратса ытамласшăн. Ун пек ытамлама вара тĕрлĕрен искусствăна ăнланса-юратса ĕçлеме пултарни кирлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ пултарулăх çыннисемшĕн мĕн ĕмĕртенпех пĕр-пĕр искусствă «хĕсĕклĕхĕнче» çеç пăчăхса ларни — ют япала. Авалхи Грецире пурăннă Фидий архитектор картинăсем ӳкернĕ, скульптурăсем касса тунă, сăвă çырнă, чаплă юрланă. Италире Возрождени вăхăтĕнче пурăннă Леонардо да Винчи, Микеланджело, Рафаэль художниксем кашни искусствăрах çынсене нумай ĕмĕрсем хушши тĕлĕнтермелле паха ĕçсем тунă. Вăтам ĕмĕрсенчи Японире пурăннă Хокусай художник хăй çырнă кĕнекесене хăех ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ. И. Е. Репин, вырăссен аслă художникĕ, «Инçетри çывăхлăх» ятлă чаплă кĕнеке çырса хăварнă. Ф. И. Шаляпин юрăçă вара кĕнеке те çырнă, портретсем те ӳкернĕ, декорацисем те сăрланă, скульптурăсем те тунă. Çавăн йышши нумай енлĕ пултарулăхлă çынсен ушкăнне чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов та кĕрет.

К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмипе ытти сăввисене пирĕн çĕршывра çеç мар, ют çĕршывсенче те пĕлеççĕ ĕнтĕ. Вăл учитель ĕçне ăста тунине те пирĕн паллă педагогсемпе литературоведсем тĕпчесе пĕлнĕ, хулăм кĕнекесенче çырса кăтартнă. Поэтăн музыкă туйăмлăхĕ пысăк пулни çинчен те тĕрлĕрен аса илӳ авторĕсем иккĕленмелле мар çирĕплетсе калаççĕ. Вăлах сĕтел-пукан таврашне те чăн-чăн художникăн çеç пулакан илемлĕх туйăмĕпе ăсталанă. Чăваш калашле, аллиури ытла та çыпăçуллă пулнă унăн! Çаврăнăçусăр ală йывăç татăкĕсенчен çеç пичетлемелли машинкă тума пултараяс çук. Унпа пĕрлех вăл илемлĕ фотографи ĕçне кăмăлланă, нумай фотоӳкерчĕксем туса хăварнă. Юлашкинчен, пире уйрăмах поэт кĕнеке илемлетмелли ӳкерчĕксем тума, çуллă сăрсемпе е кăмрăкпа портретсем тата декорацисем ӳкерме пултарни интереслентерет. К. В. Иванов Петербургри художествă Академине вĕренме кĕме ĕмĕтленнĕ. Унăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлман пулсан, вăл унпа пĕр çулта çуралнă халь Чăваш АССР халăх художникĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă М. С. Спиридоновпа е А. А. Кокель профессорпа танлашма пултармалла чаплă художник пулĕччĕ-и, тен? Çав чăваш ачисем ун чухне Академире вĕренни çинчен аслă поэт лайăх пĕлнĕ [illegible]-кен.

К. В. Иванов халăхсемшĕн тĕрме пулса тăнă Раççейре, патша правительстви ним вырăнне хумасăр хĕсĕрленĕ чăваш çыннисем хушшинче çуралса ÿснĕ. Кунта тĕнчери культурăпа анлăн паллашма мар, пули-пулми вулама-çырма пĕлесси те сайра пулнă-ха. Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ тесе ĕнентерме тăрăшнă пирĕн асаттесене, анчах вĕсем çав кĕнекене чăннипех кам çинине аванах пĕлнĕ, ăна хăйсен аллине илес тесе, çĕршыври халăхсемпе пĕрле 1905—07 çулсенчи революцие çĕкленнĕ. Шăпах çав революци поэт пултарулăхне аталантармалли майсем уçса панă. Революци хумĕпе çĕкленнĕ поэт тăван халăх пурнăçне тĕпченĕ, ăна пĕтĕм тĕнче культурипе çыхăнтарса хакласшăн пулнă. Вăл мĕн ÿкерсе хăварни пĕтĕмпех тĕнчери чаплă реалист-художниксен пултарулăхĕнчен вĕренсе пынинчен, ăна тăван халăх пултарулăхĕпе çыхăнтарма тăрăшнинчен килнĕ.

Аслă поэт тунă ÿкерчĕксене вăл çырнă сăвăсемпе танлаштарма кирлĕ мар, ÿкерчĕксенче вăл пусмăрлăха питлекен, ирĕклĕхе чĕнекен сюжетсем шыраман. Ÿкерессе те вырăссен пĕрремĕш революцине пусарнă хыççăн ытларах ÿкернĕ. Çав вăхăтра унăн чĕлхине те, алли-урине те тăлласа лартнă пекех пулнă. Учительте ĕçленĕ май вăл букварь валли ÿкерчĕксем тунă, çав ÿкерчĕксенче ăна çутçанталăка пăхса тĕпчесси интереслентернĕ, ачасен чĕрисенче вăл тĕпчевлĕх туртăмне хускатма тăрăшнă. Ÿкерме ăста пулнă пулин те, К. В. Иванов художник ĕçне профессилле ятарласа вĕренмен, çавăнпа ĕнтĕ вăл каярахпа хăй тĕллĕнех çынсене, çутçанталăка, тискер кайăксене, килти выльăхсене сăнран пăхса ÿкернĕ, кашни ÿкерчĕке епле пулин те ăста тума вĕренес тесе тăрăшнă. Çапла вĕренмелле ÿкернине эпир вырăсла «академическая штудия» тетпĕр. Çав штуди-ÿкерчĕксем тăрăх эпир аслă поэт художник ĕçне чăнласах вĕренме пуçланине, тăван халăх пурнăçне сăнаса пысăк произведенисемех çырма ĕмĕтленнине куратпăр. Тата çакна каламалла: поэтăн художествăлла пултарулăхне вăл алăпа ÿкернĕ произведенисем тăрăх çеç



«Шăнкăртатса шыв юхать
Çÿлĕ валак умĕнче...»

хакламалла мар, унăн таланчĕ пысăк пулнине вăл тунă фотоÿкерчĕксем те аван уçса параççĕ.

К. В. Ивановăн пурнăçĕпе пултарулăхне тĕпчеме пухнă материалсем хушшинче шăпах çав фотоÿкерчĕксем паха шутланаççĕ. Вăл хăйне хăех ÿкерме пултарнă. Акă, пĕр ÿкерчĕкĕ. Художник пÿлĕмĕ. Хитрелетсе тунă çирĕп те сарлака сĕтел çинче хаçатсем, лампă пур. Стенасем çинче Рафаэль ÿкернĕ «Сикстинская мадонна» (Ватиканти Сикст папа хушнипе ÿкернĕ турă амăшĕ, тĕнчери искусствăра ача амăшне сăнарласа тунă чи паллă произведенисенчен пĕри), Леонардо да Винчи ÿкернĕ «Монна Лиза Джоконда» (темĕнле чаплă вăрттăнлăха пытарса ытарлăн кулса ларакан хитре хĕрарăм портречĕ), А. А. Иванов ÿкернĕ «Явление Христа народу» (Христос халăха çăлма килни. Картинине лайăхах уйăрса илме çук, çавах пулĕ тетпĕр) ятлă картинăсен репродукцийĕсем тата авалхи Грецире тунă Афродита (илемлĕхпе юрату турри, чипер хĕрарăм) скульптурин пуç-пайĕ çакăнса тăраççĕ. Кунтах пирĕн поэт хăйĕн шăллĕне Квинтилиана пăхса кăранташпа тунă ÿкерчĕк пур. Сĕтел хушшинче поэт шăллĕпе пĕрле ларать, вĕсем темĕн çинчен хĕрсе кайсах калаçни сисĕнет. Çак пĕр ÿкерчĕке курнипех К. В. Иванов мĕнле ĕмĕтсемпе, мĕнле шухăш-кăмăлпа пурăннине, камран вĕренсе пынине, искусствă ĕçне мĕнле виçепе виçсе хакланине чылай пĕлме пулать.

Пурнăç кансĕр пулнă пулин те, К. В. Иванов хуйхăрса ларман, шанчăка çухатман, тĕнчери искусствăра паллă йĕр хăварнă çынсен пултарулăхне курса хавхаланнă, тăван халăх культурине, каларăмăр ĕнтĕ, пĕтĕм тĕнчери паха культурăпа пĕрлештерсе пуянлатасшăн пулнă. Тем тери хăрушă вăхăтра та вăл хăй каланине — «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен» тенине — çирĕп ĕненнĕ. Вăл этемлĕхĕн чун-чĕре илемлĕхне юратнă, халăх телейĕшĕн хăйсен пурнăçне шеллемен çынсен сăнарĕсене кашни чăваш курма пултартăр тесе тăрăшнă. Çапла ĕнтĕ, К. В. Иванов пÿлĕмĕнче Рафаэль, Леонардо да Винчи, А. А. Иванов ÿкернĕ картинăсен репродукцийĕсем тата Афродита сăн-скульптури çакăнса тăни ăнсăртран пулнă япала мар темелле. Авалхи Грецире хĕрарăмсен илемлĕхĕпе юрату ырлăхĕ яланах Афродита сăнарĕпе çыхăннă, унăн илемĕ каярахпа пĕтĕм тĕнчери художниксене хавхалантарнă. Джоконда сăнарĕ те ĕмĕр сÿнми телей пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă. Кам пĕлет, аслă поэт хăйĕн сÿнми сăввисене çырнă чухне Афродитăпа Джоконда илемне те аса илнĕ-и, тен?

А. А. Иванов картининче вара халăха ирĕклĕхе кăларма килекен Христос сăнарне тÿрремĕнех ÿкерсе кăтартнă. Картинă авторĕ çав произведение çирĕм çул ытла тунă, ĕçленĕ май, тахçан турра хытă ĕненнĕскер, чиркÿ вĕ-




К. В. Иванов çуралнă Слакпуç ялĕнче поэта хисеплесе лартнă палăк умĕнче — яланах чĕрĕ чечексем.

# ПОЭТ, ХУДОЖНИК

